Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 68 (4637) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 17-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*


# ĔÇ УЯВĔ

Акатуя кĕтмен тесе калама кам хăюлăх çитерĕ-ха? Уяв тĕлне пĕтĕм хула центрĕ тирпейленчĕ - асфальт çĕнелчĕ, автобус павильонĕсем те, картасемпе çул бордюрĕсем те çĕнĕ "тум" тăхăнчĕç - çак тасалăхпа йĕркелĕхе вăрахрах сыхласа хăварасчĕ. Нурлатăн тĕп площачĕ тĕрлĕ тĕслĕ пĕчĕк ялавсен ярăмĕсемпе илемленчĕ, Карл Маркс, Советская тата Гиматдинов урамĕсене вара хĕрлĕ, кăвак пусма анĕ çине "Акатуй килет!" тесе çырса çакнăччĕ. Халăх - ялти те, хулари те, хăнана килни те шăматкун ирех уява васкарĕ. Паллах ĕнтĕ, уяв пире хамăр йывăрлăхсенчен хăтармасть, анчах та кашнин кăшт та пулин канас килет.

Районти Акатуйăн чаплă пайне малтан 10 сехете палăртнăччĕ, анчах та шеллемесĕр хĕртекен хĕвел кун йĕркине улшăнусем кĕртрĕ. Çавăнпа та пĕр сехет маларах районпа хула ертӳçисем тата чаплă хăнакашни çын пĕлекен ял пурнăç "ӳкерчĕкĕсем" килсе тухрĕç: кĕнчеле умĕнчи ăстаçă, çĕртме уйăхĕнче çулнă пысăках мар утă купи, хĕрсен илемлĕ сарафанĕ, паллах ĕнтĕ, такмаксемпе хавасла ташăсем... Унтан хăнасен делегацийĕ тутар çурчĕн импровизациленĕ стенисем патĕнче пулчĕ, чăваш халăхĕн тулăх сĕтелĕ умĕнче килти сăра тутанчĕ, Нурлатри ăстаçăсен художество творчествин выставкине пăхса çаврăнчĕ те куçса çӳрекен эстрада патне çул тытрĕ.



Акă З.Гибадуллинпа М.Миншинăн "Нурлатым" юррине М.Сингатуллин шăрантарать, диктор йăлана кĕнĕ халăх уявне чысласа ыра суннă сăмахсем янăраççĕ тата ташăçăсем хитре нипе иртрĕ. Уй-хирсенче çак кунсенче те хĕрӳ ĕççи чарăнмасть. Çурхи культурăсене апатлантарас, тĕштырăсене ял хуçалăх сăтăрçисемпе çумкурăксенчен хӳтĕлес тĕлĕшпе мероприятисем ирттереççĕ. Хуçалăхсенчен чылайăшĕ выльăх апачĕсем хатĕрлеме пуçланă, кăçалхи тухăçа пухса илме техникăна хатĕрлеççĕ. Ытти отраслсенче те ăнăçлăхсем пур. Пилĕк плексĕн, районти пысăк тата пĕчĕк предприятисен малашне те реформăлас çул-йĕрпе пымалла, перекетлĕ пурăнма вĕренмелле, обществăшăн яваплă пулнине пĕр минута та манмалла мар - çапла чĕнсе каларĕ район тата хула ертӳçи мĕнпур ĕçченсене. Юлашкинчен вăл Акатуя хутшăннисене уяв ячĕпе ăшшăн саламларĕ тата ăна йĕркелеме укçа-тенкĕпе пулăшнисене тав турĕ.



сем майдана çитрĕç. Кунта, тĕп хапха çывăхĕнче çăкăр-тăварпа, писев пионсен çыххисемпе вĕсене тутар, вырăс, чăваш халăх тумĕсем тăхăннă хĕрсем кĕтсе илсе ташă картине йыхăрчĕç. Майдан вара пурне те хăйĕн илемлĕхĕпе, тĕрлĕ тĕсĕпе, уяв кĕввисемпе, ыркăмăллă кулăпа тата... чĕрене килĕшекен сюрпризсемпе тĕлĕнтерчĕ. Чи малтанхи алăк патĕнчех кĕтрĕ, сисмен-туман çĕртрен унта кукăльсемпе икерчĕсĕсем пĕçерсе кăларнă пысăк кăмака ӳссе ларчĕ, вырăс халăх халапĕнчи Кинемейпе Мучи те, хĕрелсе кайнă Йăва та пурччĕ. Кунта сасартăк ялта пурăнакан композици кăтартса ирттеççĕ. Официаллă церемоние, йăлана кĕнĕ тăрăх, районпа хула администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин уçрĕ. Вăл ял çыннисен паянхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа парса, кăçал районти тырпул ӳстерекенсем çуракине мĕнпур агромероприяти требованийĕсене пăхăнса, чи кĕске срокcенче вĕçлениине палăртрĕ. Типĕ çуркунне пулнипе хуçалăхсенче тата производство кооперативĕсенче талăкĕпе ĕçлессине йĕркеленĕччĕ тата вăл ял хуçалăхĕн мĕнпур отраслисенче, уйрăмах агропромышленность комплексĕнче реформăласси анлă пыуйăхра, пĕлтĕрхи шайпа танлаштарсан, пĕрĕнерен вăтамран суса илнĕ сĕт 39 килограмм ӳснĕ тата 1370 килограмм шутланнă. Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем тăрăшса вăй хунипе сĕт сутмалли патшалăх планне 117 процент пурнăçланă.

Пирĕн район бюджетăн тупăш пайне ăнăçлă пунăçланине палăртма та кăмăллă, вăл пенси тата бюджет учрежденийĕсене ĕç укçи вăхăтлă тӳлесе татма май парать, Ф.С.Сибагатуллин социаллă сферăри малашнехи задачăсене палăртрĕ, вĕсенчен чи кирли ялсене газ кĕртесси тесе пĕлтерчĕ. Агропромышленность комКунтах Пермьран, Ставрополь крайĕнчен килнĕ бизнесменсем тата Тутарстан хулисенчи хăнасем нурлатсене уяв ячĕпе саламларĕç, ырă сунчĕç. Тепĕр минутран Тутарстан Республикин патшалăх ялавĕ çĕкленчĕ, ăна хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн чи лайăх механизаторĕ В.Н.Васильев, "Кондурча" хуçалăхри малта пыракан доярка С.Г.Бакирова çĕклеме тивĕç пулчĕç, çав вăхăтра сцена умĕнчи симĕс площадка çине тĕрлĕ тĕслĕ шарсем йăтнă ачасем тухрĕç.

(Вĕçĕ 2 стр.)

# Закон пуриншĕн те пĕрре

**Июнĕн 9-мĕшĕнче Нурлат районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи административлă комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта комисси председателĕ - администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков, администраци пуçлăхĕн çумĕ Р.Г.Билалов, госсанэпиднадзор центрĕн тĕп врачĕ И.В.Андаров, потребитель прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен район комитечĕн председателĕ Р.Г.Суфиянов, ИГПН начальникĕ Н.Захаров тата комисси секретарĕ А.В.Бикинеева хутшăнчĕç.**

Канашлура административлă йĕркене пăсни çинчен РФ Кодексне тĕпе хурса 30 ĕç пăхса тухрĕç. Чĕннисен хушшинче суту-илӳ правилисене пăснă предпринимательсем те, ĕç вырăнĕнче ӳсĕр пулнă е эрех ĕçнĕ чугун çул ĕçченĕсем те, ĕçпе юсанмалли учреждениенчи, ЛТПри çынсене пама юраман япаласене законсăр панăшăн айăпланă граждансем те, çаплах прописксăр, тĕрĕс мар тесе шутланакан паспортпа пурăнакан граждансем те пурччĕ. Анчах та вĕсен хушшинче уйăрса панă участоксем тулашĕнче строительство материалĕсем, чĕртавар, оборудовани, çӳп-çап купаланă, çаплах хăйсем тĕллĕн хуралтăсем хăпартнă хуçасем чылайрахчĕ. Унсăр пуçне унта унччен комисси виçĕ хутчен асăрхаттарнă (майăн 3-4, 6-7 тата 12-мĕшĕсенче), çапах та комисси йышăнăвне пурнăçламан хуçасем те пурччĕ. Чăнах та ĕнтĕ чылайăшĕ тăратнă ыйтăва тӳрех, сăмахламасăрах ăнланса кĕске вăхăтра хуралтăсемпе гаражсене пăсма е урăх вырăна куçарма çырнă подписка панă. (Паллах ĕнтĕ, çакна мĕнле пурнăçланине комисси представителĕсем вырăнта тĕрĕслĕç).Гиматдинов урамĕнчи 15-мĕш çуртра пурăнакан Ибрагимова тата Шашин урамĕнчи 27-мĕш номерлĕ çуртри Кузьмина никама та итлесшĕн те, ăнланасшăн та пулмарĕç, вĕсен хăйсен сăлтавĕсем пурччĕ.

- Мĕншĕн мана кăна чĕнетĕр, картишĕнче ытти гаражсем те нумай вĕт? Мĕншĕн-ха ыттисем материалсем упраççĕ, мана вара юрамасть? - тесе пуçланнă калаçу чăтăмсăррăн кăшкăрашнипе вĕçленчĕ:

- Пĕр хута та алă пусмастăп!

- Сирĕн ирĕк çук! тата ытти те. Çакăнпа комисси членĕсем нимĕнле те килĕшмеççĕ: "Пĕр çулйĕр кăна пур - закона пăхăнмалла! Закон вара пуриншĕн те пĕрре!" Çапла, нимрен те килмест: эсир гаражăра 20 е 10 çул, 1 е 2 çул каялла тунă-и е планласа ĕнер е паян кăна çуна лартнă-и, кам пулнине шута илмеççĕ - вăрçă ветеранĕ-и, ахаль ĕçчен-и, хуçалăх председателĕ е çивĕч чĕлхеллĕ кил хуçи хĕрарăмĕ-и - район администацийĕн решенине пурнăçлама тивет (вула: патшалăх Законĕ). Çак çĕр çинче пурăнатăн, сывлăша сывлатăн, шыва ĕçетĕн пулсан, тавралăхшăн, пирĕн пĕрлехи çурта - яла е хулана тирпей-илем кĕртессишĕн, тасатассишĕн тăрăшмалла.

Темиçе хут асăрхаттарнине шута илмен граждансен ĕçĕсене комисси решенине тĕпе хурса правăна сыхлакан органсене параççĕ тата çапла майпа ку ыйтăва урăх хускатмĕç. Халлĕхе вара ĕçе пуçăнма чи меллĕ вăхăт.

## Меценатсене пысăк тав

Кăçалхи Акатуй уйрăм спонсорсем пысăк пулăшу панипе иртни çинчен маларах та пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Çапла, "РИТЭК" АО генеральнăй директорĕ В.И.Грайфер 50 пин тенкĕ укçа панă, "Нурлатнефть" НГДУ начальникĕ М.М.Хузин - "Ока" автомашина, районпа хула администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин, сахăр завочĕн директорĕ А.К.Савинов, райпо правленийĕн председателĕ М.С.Муратов, "Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО директорĕ А.С.Насолдин, "Зузеевнефть" начальникĕ В.А.Николаев, "Нурлат" агрофирмăн генеральнăй директорĕ Р.С.Чахмахчев - "Урал" мотоциклсем. Пермь хулинчи С-ОПТ генеральнăй директорĕ Ф.С.Нургатин (Аксу районĕнчи Киязлы ялĕнче çуралнă) "Урал" мотоциклпа DEWO телевизор парнеленĕ. Унсăр пуçне чылай ертӳçĕсем, уйрăм çынсем, предпринимательсем Акатуй çĕнтерӳçисемпе малти вырăнсене йышăннисене телевизорсем, холодильниксем, кавирсем, кĕпе-йĕм çăвакан машинăсем, магнитофонсем, чей сервизĕсем тата ытти япаласем чылай панă. Акатуйăн йĕркелӳ комитечĕ Суха уявне ирттерме укçа-тенкĕ енчен пулăшнăшăн чун-чĕререн тав тăвать, пурне те çирĕп сывлăх, телей, ăнăçлăхсем сунать.

# Ташла - юрла, савăн, халăх!

Акатуй нихăçан та кулă-шӳтсĕр, юрă-кĕвĕсĕр, вăййăсемсĕр иртмест. Мĕн тесен те, акатуя ĕлĕк-авалтанах мĕнпур халăх - ватти те, вĕтти те чăтăмсăр, хавхаланса кĕтсе илет. Пирĕн çĕр çинче мĕнле тапхăрта та ăста кĕрешӳçĕсем тата лайăх юланутçăсем нумай пулнă. Пирĕн халăх шухăшласа кăларнă çавранăçуллă та тавçăруллă пулма хистекен кулăшла вăййăсем тата мĕн чухлĕ. Кусем михĕ тăхăнса чупасси, чӳлмексем ватасси, шертепе хăпарасси, михĕсемпе çапăçасси, юлашки çулсенче вĕсем çумне армрестлинг тата чылай ытти хушăнчĕ. Çав кун хăйсен вăййĕпе, хăюлăхĕпе палăрнă, вăр-варлăхĕпе никама парăнман арçынсемпе хĕрарăмсене палăртмасан çылăх пулĕ. Канат туртассипе иртнĕ ăмăртура чи вăйли "Татнефть-Нурлатнефтешыравра" ĕçлекен В.Сафонов (1-мĕш вырăн) пулчĕ, УМС ĕçченĕ И.Киямов иккĕмĕш тата Р.Хамидуллин виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Патак туртассинче С.Исаев, В.Глухов тата И.Прокопьев чи лайăх кăтартусем турĕç.

Армрестлинг вăййине хĕрарăмсем те хутшăнчĕç. 26 хĕрарăм хушшинче пĕрремĕш парнене нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленирe ĕçлекен Найля Хусаинова илчĕ, иккĕмĕшне - сĕт-çу комбинатĕнче вăй хуракан Талия Мавлютова, виççĕмĕшне РСУ ĕçченĕ Амина Валиуллина тивĕç пулчĕ. Вăййа хупшăннă 52 арçын хушшинче пĕрремĕш вырăна Владимир Ерамасов ("Нурлатнефтешырав"), иккĕмĕшне - Валерий Приказчиков ("Нурлатнефть" НГДУ) тата виççĕмĕш вырăна Рустам Гайсин ("Зузеевнефть") йышăнчĕç.





Кире пуканĕ çĕклессинче виçĕ виçе категорийĕпе ăмăртрĕç. 65 килограма çитичченхи виçе категорийĕнче Ильшат Абдулвалеев (Киклĕ), 24 килограмлă кире пуканне 30 хут, Фанис Галямов (Хумаел) - 29, Фаиль Киямов (Чулпан) 28 хут çĕклесе I-III вырăнсене йышăнчĕç. 80 килограма çитичченхи виçе категорийĕнче Фарит Салахутдинов ("Нурлатнефть" НГДУ) кире пуканне 71 хут, Равиль Измайлов (ăшă сечĕ) - 61, Александр Астряков ("Нурлатнефтешырав") 60 хут çĕклерĕç.

80 килограмран ытларах виçе категорийĕнче пĕрремĕш парнене Киклĕри Ильнар Айсин(35 хут), иккĕмĕшне - НГДУри Евгений Казаев (25) тата виççĕмĕш парнене нефтебазăра вăй хуракан Сергей Мингалимов (22 хут) тивĕç пулчĕç. Ĕлĕкавал кĕвентепе шыв йăтса илемлĕ ныраси хĕрарăм шăпи шутланнă пулсан, Акатуйра çак ăмăртăва хутшăнас текенсем хушшинче арçынсем чылайччĕ. Çав кун пирĕн тараватлă та илемлĕ майдан тĕрлĕ наци вăййисен мĕнпур уйрăмлăхĕсене пуçтарчĕ. Эсир пĕр вăйă картинчен тепри патне çӳреме ывăнтăр пулсан, тархасшăн, юрăçăсемпе ташăçăсен ăсталăхне курса киленме май пур. Пирĕн районти юратнă пултарулăх артисчĕсем ирех хавас кăмăллăччĕ. Çав кун майдан сцени çинче пирĕн республикăн пуриншĕн те паллă таланчĕсем: юрă искусствин легенди Ильхам Шакиров, пурте юратакан Хания Фархи тата "Байрам" ансамбль, нурлатсем тахçантанпах пĕлекен Самар хулинчи "Ялкынлы яшьлек" ансамбль, наци чапĕ Вафира Гиззатуллина, Мирсаит Сунгатуллин пулчĕç, çаплах Кирам Сатиев купăсçăн вăййине те чылайăшĕ тахçанччен аса илĕç. Çавăнпа та кăçалхи Акатуй уявĕн чи илĕртӳллĕ вырăнĕ сцена çывăхĕнчи площадка пулчĕ тени ӳстерсе калани пулмĕ. Куракансен шучĕ, концерт вĕçлениччен те чакмарĕ.



Анчах та уяв майданĕ тата та анлăрахчĕ: ачасен халап площадки шавласа çеç тăчĕ. Ачасем чуччусемпе ярăнчĕç, вĕсем валли ятарласа хатĕрленĕ вăййăсене хутшăнчĕç, парнесем илчĕç, чăннипех те телейлĕ пулчĕç.



Кăшт аяккинерех вырăнти художниксемпе ăстаçăсен выставки илĕртрĕ. Нурлатсен ĕçне районти вĕрентӳ пайĕ май уйăхĕ вĕçĕнче йĕркеленĕ творчество выставкинче тăратначчĕ, халь вара çак мероприятие уçă, симĕс площадкăра ирттерме услови туса панă. Уяв вĕçленнĕ чухне вара унти картинăсене тата ытти предметсене кăмăл пуррисем хăйсем валли туянма пултарчĕç. Çынсем илемлĕх патне туртăннине курсан ирĕксĕрех халăх сăмахне аса илетĕн: выçă - çавă пурте пурри, мирлĕ те кăвак тӳпе - ку телей мар-и? Çамрăк чухне çăпатапа тата пиртен çĕленĕ кĕпепе çӳренĕ, выçлăх мĕнне пĕлекен кинемейсем халь юратнă Ханияпа Ильхамов юрланине итлеме хаклă та илемлĕ тумтирсемпе пынă. "Кинемей, мĕнле пурăнатăн? Кăмăлу мĕнле?" - тесе ыйтсан, çăкăр çинчен, тутти - шӳт çинчен шухăшлать. Пирĕн хальхи çителĕклĕ пурнăç, мĕн туянас тетĕн вĕсем акă мĕнле хурав пачĕç:"Хĕрĕм, тавах Турра, çак çутă кунсем çитиччен пурăнтăмăр ĕнтĕ".

**Уяв репортажне Т.Назарова, Р.Гильмутдинов, С.Хайруллина, К.Ямалетдинова хатĕрленĕ. Н.Азизов ӳкерчĕкĕсем.**

# Абсолютлă паттăра - "Ока"

Кăçал наци кĕрешĕвĕн ăмăртăвĕсем вăй виçме кăмăл тунă 36 паттăр хушшинче иртрĕç. Вĕсене хак пама Раççей шайĕнче чи авторитетлă, тивĕçлĕ категориллĕ судьясене шанчĕç. Кусем СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ М.М.Сахабутдинов тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ, спорт мастерĕ А.Ш.Шайхутдинов. Çавăнпа та кăçалхи ăмăртусем унта хутшăнакансемшĕн наци кĕрешĕвне вĕрентекен лайăх шкул пулчĕ. Вăл вара кашни тапхăрта питĕ çивĕч пулчĕ, паттăрсем хăйсен пĕтĕм ăсталăхĕпе пĕлĕвне кăтартрĕç, куракансем вара çĕнтерӳçĕсене алă çупса хавхалантарчĕç. Кĕрешӳ 5 виçе категорийĕпе иртрĕ, кашни категорири çĕнтерӳçе мотоциклпа наградăларĕç, иккĕмĕш вырăн йышăннисене вара - тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизорсемпе. Пĕрремĕш виçĕ категорире çĕнтерӳçĕсем Чулпантан пулчĕç: 60 килограма çити виçе категорийĕнче Равиль Валиев çĕнтерчĕ, 70 килограма çити - Ильяс Садыков, 80 килограма çити - Рияз Галимзянов. Çапла майпа Акатуй майданĕнчен Чулпана тӳрех виçĕ мотоцикл кайрĕ. 90 килограма çити виçе категорийĕнче çĕнтерӳçе Нурлатри маркетинг службин департаменчĕн менеджерĕ Фарит Сибагатуллин тухрĕ, 90 килограмм ытларах виçе категорийĕнче Çыранçи Чаллăри Айрат Гилаев йышăнчĕ. Финалта юлашки виçĕ виçе категорийĕнчи çĕнтерӳçĕсем тĕл пулмаллаччĕ. Ăмăрту пуçламăшĕнче суранланнипе Р.Галимзянов кĕрешĕве малалла тăсма пăрахăçларĕ. Сибагатуллинпа Гилаев тĕл пулăвĕ вара пĕрремĕшĕ çĕнтернипе вĕçленчĕ. Ку çак икĕ вăйлă кĕрешӳçĕ хушшинчи пĕрремĕш тĕл пулу пулман иккен, кашни хутĕнче вĕсем Сибагатуллин çĕнтернипе вĕçленнĕ. Итогсем пĕтĕмлетнĕ хыççăн Акатуй-98 абсолютлă паттăрĕ Фарит Сибагатуллин пулчĕ. Ăна 120 килограмм таякан така тата "Ока" автомашина ("НН" НГДУ начальникĕн М.М.Хузинăн парни) парнелерĕç.



Икĕ кавир çинче иртнĕ ăмăрту кăтартуллă пулчĕ (судьясем те çакна тимлĕх уйăрчĕç), районти Хаджимуратовпа Гайнуллин пек кĕрешӳçĕсене лайăх хатĕрленнĕ çамрăксем улăштараççĕ. Чăнах та, çав кун Акатуй кавирĕ çинче Чулпанти шкултан пиллĕкĕн, Анат Нурлатри шкултан тăваттăн кĕрешрĕç. Вĕсем çак хиçеплĕ ăмăртăва, хăйсен пин-пин ентешĕ умне ытти тĕлпулусенче çĕнтернĕ, чăн-чăн спортсменсем пек тухрĕç. Ăмăртăвăн тĕп судйи Магас Мубаракшович Сахабетдинов Нурлатра кĕрешӳ спорт требованийĕсемпе килĕшӳллĕн иртнине пĕлтерчĕ. Паллах, Хусантан, Элкел тата ытти районсенчен килнĕ кĕрешӳçĕсен ăсталăхне те палăртмасăр хăварма юрамасть, вĕсем пирĕн кĕрешӳçĕсемшĕн конкурентсем пулса тăраççĕ, ку вара, паллах ĕнтĕ, ăмăртăва тата та çивĕчлетет. Кăçалхи ăмăртăва ытти наци çыннисем хутшăннине палăртма та кăмăллă. Çапла, вĕсенчен пĕри В.Тарасов ("Зузеевнефть") хăйĕн 90 килограма çитичченхи виçе категорийĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

*Хăна юррисем*

## Лутраях та шĕшкĕн майри нумай

Атăлта та çăрттан, ай, чăматъ-çке,
Шăмми-шакки çĕрте çĕрет-çке.
Мĕншĕн калаçмастăр, юрламастăр -
Вилсен чĕлхе çĕрте çĕрет-çке.

Уяр кунсем ахаль, ай, иртиччен
Мерчен çухасене юсар-и?
Пур тăвансем пĕрле пухăннă чух
Атьăр, харăс тăрса юрлар-и?

Сулăнмасăр утă, ай, çулас мар.
Сар чечеке сая ярас мар.
Юрламасăр ĕçкĕ, ай, ĕçес мар,
Лайăх ĕçке сая ярас мар.

Лутраях та шĕшкĕн майри нумай,
Татас-татас тесех каç турăм.
Çак тăвансем патне, ай, килсессĕн
Каяс-каяс тесех каç турăм.

Тăхăнмăттăм эпĕ çак çĕлĕке,
Çав пусарать кăтра çӳçĕме.
Юрламăттăм эпĕ çак юррăма,
Çав пусарать çунакан чĕрене.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.



С.Майстер фотоэтюдĕ

# Телевидение

**Пятница, 19 июня**

**"Татарстан"**

7.00-8.00 "Чулпан" 18.45,20.45 "Җиһан" 19.00 "Батулла дәресләре" 19.20 "Дин һәм тормыш" 19.45,21.45 Новости 20.00 "Музыкаль сәхифә" 20.30 "Әлли - бәлли - бәү" 21.00 "Җомга көн кич белән" 22.00 "В Госсовете Татарстана"

**1 канал ОРТ**

6.00 "Доброе утро". 9.00,12.00,15.00,18.00,0.05 Новости. 9.15,18.20 "Роковое наследство". 10.10 Клуб путешественников. 11.00,00.15 Футбол. 12.15 "Вместе". 13.00 "Четыре танкиста и собака". 15.20 "Белый клык-2" 17.00 "Улица Сезам". 17.30 "Чердачок Фруттис". 19.10 Здоровье. 19.45 Поле чудес. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Детектив "Подходящие улики". 23.15 Взгляд.

**Канал "Россия"**

7.00 Мультфильм. 7.15 П р о с н и с ь. 7.30,11.00,14.00,17.00,20.00 Вести. 8.00 "Дежурная часть". 8.15 "Товары - почтой". 8.25 "Мир здоровья". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 "Православный календарь". 9.00 "Чудный остров".Док.фильм. 9.25 "Бродвей нашей юности". 10.05,20.45 "Санта-Барбара". 11.30 "Петербургские тайны". 12.25 Старая квартира. 13.45 Торговый дом "Ле Монти". 14.30 "Али-баба и сорок разбойников". 15.00 "Маленький бродяга". 15.25 "Охотник.Последняя схватка." 20.25 Подробности. . 21.45 Сам себе режиссер. 22.20 "Городок". 22.50 Восьмая церемония вручения театральной премии "Хрустальная Турандот". 23.45 Вести. 0.20 Футбол.

**РИО**

17.35 Дорожный патруль
17.45 Оперативные хроники недели.
17.55 "Дежурная аптека-2"Сериал.
18.30 Студия два
19.15 Шесть Самарских новостей
19.30 Катастрофы недели
20.00 "Вы - очевидец"
20.30 Новости дня
20.55 "Сделка состоялась".Триллер.
22.45 "Обоз".
23.45 "Такси ТВ-6"

**Суббота, 20 июня**

**"Татарстан"**

7.00 - 8.00 "Чулпан" 19.00 Мультфильм 19.15 "Бизнес ТВ" 20.00 "Чай или кофе?" 20.30 "Әлли - бәлли - бәү" 20.40 "Җыр бәйгесе - 98" 21.10 "Сабантуй, сабантуй, сабантуй..." 22.10 "Видеоспорт - авто" 22.40 "Досье 02" 22.55 "Таяну ноктасы"

**1 канал ОРТ**

8.00 "Приказ: огонь не открывать". 9.45 Слово п а с т ы р я. 10.00,15.00,17.20 Новости. 10.10 Домашняя библиотека. 10.30 "Утренняя почта". 11.05 "Каламбур". 11.40 Смак. 12.00 Возвращение Третьяковки. 12.30 Мультфильм. 12.50 Америка с М.Таратутой. 13.25 Х/ф "Завтра была война". 15.20 "Цивилизация". 15.50 Мультфильм. 16.50 В мире животных. 17.30 Как это было. 18.40 Джентльмен-шоу. 19.10 "Ералаш". 19.35 Приглашает концертная студия "Останкино". 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Что? Где? Когда? 1.00 Футбол.

**Канал "Россия"**

8.00 Утро крестьянина.8.30 "Красная книга".8.40 Фестиваль "Кинотавр". Дневник..Мультфильмы. 10.30 "Домашний очаг"10.55 Вовремя. 11.25 Доброе утро, Страна! 12.10 "Почта РТР". 12.35 "У всех на устах". 13.05 Там-там.14.00, 20.00 Вести. 14.30 "Люди и деньги". 15.00 Федерация. 15.55 "Все о велосипеде." 16.20 Футбол. 18.30 "Ваши любимые мелодии." 18.55 Моя семья. 20.35 "Аншлаг" и Ко. 21.35 "Здравствуй, я вернулся..."Вечер памяти Ю.Визбора. 00.00 Кольцевые автогонки. 00.15 "Апполон-11".

**РИО**

7.00 Шесть самарских новостей. 7.10 Самарская погода. 7.15 "РИО-Маркет". 7.35 Диск-канал. 8.25 Мультсериал "Детектив Боги". 8.55 Детский сеанс "Белый клык".10.25 Мультфильмы. 11.05 Маленькое утреннее шоу "З.К.". 11.30 ТСН-6. 11.45 "Суперагент Шимпанзе". 12.15 Мультфильмы. 12.40 "Спасибо за покупку". 13.00 "Мужской клуб" 13.50 "Нью-Йорк, Нью-Йорк" 14.25 "Ночной патруль" 16.15 "Такси-ТВ-6" 16.35,19.25 Видеоклипы.16.40 ДИСК-канал. 17.30 ТСН-6. 17.35 Дорожный патруль.17.50 "Автодром".18.05 "Сызранские вести"18.30 "Звездная студия два" 19.45 "О.С.П. - Студия" 20.30 Скандалы недели. 21.00 "Фитиль" 21.20 "Моя морячка"Х/ф. 22.55 "Шоу Бенни Хилла".23.25 "З.К.".

**Воскресенье, 21 июня**

**"Татарстан"**

7.00 - 8.00 "Чулпан" 18.15 "Пульс" 18.30 "Видеоспорт" 18.45 "Телебуклет" 19.00 "ТОН" 19.40 "Автокалейдоскоп 20.00 "Коръәнне яратам" 20.35 "Җырлыйк әле бергә - бергә" 20.45 Т.Галиуллин. "Олыларда бала - чага уены" 21.45 "Лики танца"

**1 канал ОРТ**

7.40 "Приказ: перейти границу" Х/ф.9.15 Лот-то - Милли-он.9.35,16.40,17.15 "Д и с н е й - к л у б" 10.00,15.00, 1.00 Новости. 10.10 "Непутевые заметки" Дм.Крылова. 10.30 Пока все дома. 11.10 Утренняя звезда. 12.00 Служу России! 12.30 Играй, гармонь любимая! 13.00 Крестьянские ведомости. 13.30 "Подводная одиссея команды Кусто". 14.25 Смехопанорама. 15.20 Клуб путешественников. 16.05 "Колесо истории". 17.50 "Золотой теленок"1,2 серии. 21.00 Время. 21.35 Фильм "Воспитание Аризоны". 23.30"Абажур". 00.00,1.10 Футбол.

**Канал "Россия"**

8.00 "Служу Отечеству!".8.30 Мультфильм.8.40 "Осторожно, Модерн!"9.10 "Аншлаг" и Ко.10.00 "Городок". 10.25 Доброе утро, Страна! 11.15 Русское лото. 11.55 Футбол. 13.40 "Мир книг с Леонидом Куравлевым". 14.00 Вести. 14.30 Пульс. 15.00 Парламентский час. 15.55 "Все о велосипеде". 16.20 Футбол. 18.30 "Ваши любимые мелодии". 18.45 Старая квартира. 20.00 Зеркало. 21.00 "Театр + ТВ". 21.45 Футбол. 23.30 "К-2" представляет" 0.25 Тур ДДТ. "Мир номер ноль" 0.50 "Дирижер"Х/ф.

**РИО**

7.00 "Благая весть" 7.25 Дорожный патруль. 7.35 Диск-канал. 8.25,10,05, 12,55 Мультсериал "Детектив Боги". 8.55 Детский сеанс "Слепая птица".10.40 "Спасибо за покупку". 10.55 Шоу еды. 11.30 ТСН-6. 11.45 "Мария Антуанетта" 1 серия. 13.25 Телемагазин. 13.38 "Любишь-смотри".13.55 "Канон". 14.30 "Я сама" 15.25 Док.сериал. 16.10 "Такси ТВ-6"16.25 Спорт недели. 17.00 РИО-маркет. 18.00 Воскресная студия два. 19.00 "Обозреватель" 20.05 "Фитиль" 20.15 "Поклонник". 22.10 "Шоу Бенни Хилла"
22.45 "Такси-ТВ-6".

# Пĕлтерӳсем

*Хула варринче е халăх нумай пурăнакан микрорайонта магазин валли (пром. таварĕсем) çурт е пӳлĕм аренда илетĕп. Адрес: Куйбышев урамĕ, 29-7.*

* * *

*ВАЗ-2110 васкавлă сутăнать, 6 пин километр çӳренĕ, аквамарин тĕслĕ, "Soni" магнитофон, сигнализаци.*
*Телефон: 5-36-40.*

* * *

*Паха сортлă çăнăх сутатăп. Пĕр миххи - 85 тенкĕ. Телефон: 5-24-97.*

* * *

*Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнче нӳхреплĕ лайăх гараж сутăнать. Адрес: Московская урамĕ, 5-76.*

* * *

*Запас пайсем валли "ЛУАЗ" сутăнать. Гиматдинов урамĕнчи 27-мĕш номерлĕ çуртра хăть хăш вăхăтра та ыйтса пĕлме пулать.*

* * *

*Строительство материалĕсем (цемент, рубероид, кирпĕч, шифер) туянас текен пенсионерсене пенси шутĕнчен пенси удостоверенине кăтартсан МПП çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕнче çак адреспа туянма пулать: Гагарин урамĕ, 13а çурт. Телефон: 2-14-71.*

* * *

*Кивĕ автозаправка патĕнче гараж, ВАЗ-2103 сутатпăр, хаклă мар. Адрес: К-Маркс проспекчĕ, 2-19.*

* * *

*1993 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутăнать. Ахметкино ялĕнче Г.Мустафинран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*1996 çулхи декабрь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-21099, усă курнă компьютер сутатпăр. Телефон: 5-27-62.*

* * *

*Силикат кирпĕч сутатăп, пачки - 600 тенкĕ, шифер - 13 тенкĕ. Леçсе паратăп. Свидетельство номерĕ 268/97. Телефон: 8(235) 5-65-19.*

* * *

*Якуркелĕнчи вăтам шкул Галина Павловна Евлампьева ячĕпе панă 904827 номерлĕ çухатнă аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

Абонент кĕнекин законĕпе тата условийĕсемпе, çутçанталăк газĕшĕн тӳлемелли договорпа килĕшӳллĕн, иртнĕ уйăхшăн тепĕр уйăхăн 10-мĕшĕччен Тутарстан Министерствин Кабинечĕ палăртнă хаксемпе килĕшӳллĕн тӳлемелле. Вăхăтлă тӳлеменнипе парăм ӳснисем 1998 çулхи июнĕн 17-мĕшĕччен тӳлесе татмасан, газ пама чаратпăр. Парăм пуррипе çуккине пĕлес тесен "Нурлатгаз" ЭПУ газпа тивĕçтерекен служба çак адреспа пымалла: Нурлат хули, Гиматдинов урамĕ, 158.

*М.Б.Багрянцев врач*
*çынсене эрех ĕçнинчен тата*
*табак*
*туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*
*Пирĕн патра кăна!*

Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодированни хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!

Сипленĕ кунсенче, эрнекунсенче, июнĕн 19, июлĕн 3-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. 2339